## ТАПРА СĔТКЕНĔ

Хальхи чăваш литературинче Яков Ухсай ячĕ — чăн-нипех чаплă ят. Ухсай — паянхи чăваш çырулăхĕн вăйĕ, çĕнтерĕвĕ, мухтавĕ. Ухсай поэзийĕ тивĕçлипех пирĕн литературăра çĕнĕ самана уçса пачĕ, Ухсай вăл — хăйне уйрăм пĕр тĕнче, теме пулать. Ку чухнехи чăваш çырулăхне Ухсая пĕлмесĕр ăнланма та, вĕренме те май çук. Çак питех те талантлă юрăçă пурри чăваш поэзине илем кӳрсе, вăй парса тăрать. Халĕ эпир поэзири ăсталăха Ухсай çӳле çĕкленĕ тӳперен виççе хаклама, унпа танлаштарса пăхма пултаратпăр, çак çӳллĕшрен малашнехине, инçетрине, хамăр çырулăх пуласлăхне витĕртерех куратпăр.

Пирĕн нумай нацилле совет литературинче Ухсай чи çутă çăлтăрсенчен пĕри, тенĕччĕ писательсен Пĕтĕм Российăри съездĕнче калана докладра Л. Соболев. Чăнах та ĕнтĕ, Ухсай ятне пирĕн республикăра çеç мар, пĕтĕм Совет çĕршывĕнче лайăх пĕлеççĕ, унăн чылай произведенийĕсене тĕрлĕ чĕлхепе куçарса кăларнă. Унăн «Кĕлпук мучи», «Ту урлă çул», «Çĕр», «Силпи çăлкуçĕ», «Кĕслету тăрринче», «Чапаевпа тĕл пулни», «Тутимĕр» тата ытти нумай произведенийĕсем яланлăхах совет литературин ылтăн фондне кĕрсе юлчĕç, вулакансем вĕсене пысăк хак пачĕç. Вăл çав произведенисенче саманан пысăк ыйтăвĕсене хускатрĕ, хальхи чăваш çыннисен, Совет влаçĕпе пĕрле ӳссе çĕкленнĕ, улшăнса çĕнелнĕ совет çыннисен тĕрĕс те витĕмлĕ сăнарĕсене тума, вĕçене талантлă,

чăн пурнăçри пек тĕрĕс çырса кăтартма пултарчĕ. Ухсай произведенийĕсене вуласан, пирĕн Чăваш çĕршывĕн аталанăвĕнчи вăрăм тапхăр, иртнинчен пуçласа паянхи куна çитиччен, куç умне тĕкĕр çинчи пек, питĕ ăста художник сăрланă хитре те тĕп-тĕрĕс ӳкерчĕк пекех тухса тăрать.

Ухсай пултарулăхне тĕплĕнрех ăнланас тесен, унăн ăсталăх аталанăвĕн тĕп тапхăрĕсене, унăн поэзи уйрăмлăхĕсене кăштах та пулин пăхса тухни кирлĕ.

Çырасса Ухсай питĕ çамрăкла, вунтăватă-вунпилĕк çултах, çырма пуçланă. Хăй каланă тăрăх, унăн çак ăсталăхне, çутçанталăк пилленĕ талантне аталантарма çемьери лару-тăру, ашшĕ-амăшĕ, вĕсен йăхĕ сăвă-юрра, юмах-такмака юратни, тăван чĕлхене хисеплени нумай пулăшнă. Аттерен эпĕ тăван чĕлхе пуянлăхне, аннерен чăваш чĕлхин янравлăхĕпе илемлĕхне вĕрентĕм тесе Ухсай хăй те час-часах калать. Атте-анне мана ача чухне чăваш юмахĕ-халапĕсене каласа панисене, чăваш юрри-такмакĕсене юрласа панисене халĕ те астăватăп, тесе аса илет поэт. Çапла ĕнтĕ, пулас поэтăмăр ача чухнех чăваш сăмахлăхĕн питĕ пуян та асамлă тĕнчипе паллашнă, çамрăкла çуралнă çак кăмăлĕ унăн кайран та сӳнмен: чăваш халăхĕн вăрăм та тертлĕ историне тĕпчесе вĕренес, халăх ăсталăхĕпе сăмахлăхĕн ахах-мерченĕн çиçекен ылтăн пĕрчисене çине тăрса пухас кăмăл унăн, ача чухнех вăраннăскер, шкулта, кайран Мускав университетĕнче вĕреннĕ, Ĕпхӳри наукăпа тĕпчев институтĕнче, Ульяновскри педагогика техникумĕнче ĕçленĕ чухне те хавшаман.

Чăваш йăли-йĕркисене питĕ хисеплесе пурăнакан кил-йышра çуралса ӳсни, Силпи таврашĕнчи илемлĕ çутçанталăк, Ухсай хăй калашле, С. Аксаков çав тери хитре сăнласа панăскер, çавăн пекех хăйне хурăнташ та лекекен К. В. Ивановăн çутă тĕслĕхĕ — çаксем пурте çамрăка сăвă-юрă çырма чĕннĕ. Чăваш поэзийĕн клас-

сикне К. В. Иванова асра тытса ёнтĕ, Ухсай хăйĕн малтанхи сăввисенчен пĕринче çапла çырать:

Вăл та, эп те юрă йăхĕнчен —
Тахçанах унпа эпир юлташлă.

Тăван кĕтес, тăван кил, ачаран юратнă тавралăх кирек хăçан та поэт чĕринче, ăна яланах чĕнсе тăраççĕ. Мускавра вĕреннĕ тата ĕçленĕ чухне те, столицăн шавлă кĕрлевĕнче те сăвăç вĕсене манмасть, яланах аса илет, чунĕпе тăван çĕрсем еннелле туртăнать, вĕсемшĕн тунсăхлать, тăван кил çинчен хитре йĕркесем шăрататать.

Общежитири пӳлĕмре шухăша кайса ларать-и вăл, юлташĕсемпе тĕл пулать-и, ун чухнехи шавлă литература тавлашăвĕсене, кирек кама та пăтраштарса яма пултаракан хĕрӳ калаçусене итлет-и, е ялтан пынă çамрăк каччăна шалтах тĕлĕнтерсе яракан искусствăн чаплă керменĕсенче пулать-и — кирек хăçан та поэт килнеллех, хăй çуралса ӳснĕ тăван ялаллах туртăнать, вĕсене тăтăшах аса илет. «Силпи енчи çилсем» кунта, Мускава вĕçсе килнĕн, тăван ял хыпарĕсене çитернĕн, хăйне кăштах ӳпкеленĕн те туйăнать ăна. Çав ятлă сăвăра вăл ун пирки ак мĕн каласа парать:

Вăрманлă, улăхлă Силпин
Эмеллĕ тăрă шывĕнчен
Писсе тăрсан, чĕрӳн таппи
Чакман-ши санăн шавсенче?

Инçетре выртакан тăван ялтан вĕçсе килнĕ çил кашлавĕ ăна хăй кам иккенне, тус-тăванĕсене, çуралнă çĕр-шыва манасран асăрхаттарнă пек илтĕнет.

— Якку ачам,— тет çил мана,—
Хăвна юратнă çĕршывна
Мĕскершĕн хăвăртах манан,
Кĕртместĕн эсĕ сăввуна?

Ухсай çырнисенче çамрăклах, малтанхи сăввисенчех

хӑйӗн сасси, ӑна ҫеҫ тивӗҫлӗ кӗвви палӑрать, вӑл мода хыҫҫӑн, ун чухне йышлӑн шутланнӑ тӗрлӗ «измсем» хыҫҫӑн каймасть. Пысӑк хулана ӑс пухма пынӑ каччӑ пӗрремӗш гонорар шучӗпе ҫӗнӗ костюм, ҫӗнӗ атӑ-пушмак илсе ярать, анчах ун чун-чӗринче ҫаплах тӑван кӗвӗсем, вӗсем хытӑран хытӑ янӑраҫҫӗ, вӑл ҫине тӑрсах хӑй ҫулне шырать. Сӑмах янравлӑхӗпе кӑна йӑпанакан сӑвӑҫсем хыҫҫӑн каймасть, сӑвӑ-юрӑ ытахальтен ҫеҫ вулакан япала маррине, вӑл ҫӗнӗ пурнӑҫ тӑвас ӗҫри хӑватлӑ хатӗр пулнине ҫамрӑклах ӑнланса илет Ухсай.

Чӑваш мӗн ӗлӗкрен вӗреннӗ ҫынна пысӑка хурса хакланӑ, унпа пӗтӗм ялйыш мухтаннӑ, вӑл тӑван халӑхне усӑ кӳрессе ҫирӗп шаннӑ. Ку шанӑҫ чӑваш халӑхӗн просветителӗ И. Я. Яковлев вӗрентсе кӑларнӑ нумай ҫынсен пархатарлӑ ӗҫне кура татах ҫирӗпленнӗ. Ашшӗ-амӑшӗ те, пур-ҫук пек укҫи-тенкине пухса ачисене вӗренме ярсан, яланах халӑхшӑн ӗҫлеме, усӑллӑ ҫын пулма лехил панӑ. Ухсай ҫаксене яланах асра тытнӑ, хӑйне халӑх умӗнче пысӑк парӑмра шутланӑ, парӑмне хастар ӗҫленипе татма тӑрӑшнӑ.

Ҫӗршывӑм, сан ҫинчен чунпа эп
Ҫырасшӑн ылтӑн кӗнеке,—

акӑ мӗнле ӗмӗт, мӗнле ырӑ шухӑш ҫунатлантарнӑ ӑна, вӑйпа чӑтӑмлӑх, иксӗлми тӑрӑшулӑх парса тӑнӑ. Ҫакӑ та тӗлӗнтерет: поэзире, пӗтӗм литературӑра вӑл вӑхӑтра йышлӑн ҫуралнӑ тӗрлӗ формалистла-абстрактлӑ юхӑмсен ытамне те кӗрсе ӳкмест Ухсай, вӑхӑтлӑха вӗсен витӗмне лексен те, ку тапхӑр унӑн нумая пымасть, ҫак пуҫа темӗнле каппайчӑкла шухӑш-сӗрӗмпе минретекен япаласенчен сӑвӑҫ хӑвӑрт хӑтӑлать. Поэтӑн сывӑ чӗри, тӑван халӑхӑн ӗҫӗ-хӗлӗпе тата шухӑш-кӑмӑлӗпе тачӑ ҫыхӑннӑскер, чӑваш литературин тата классикла вырӑс литературин ырӑ традицийӗсем ҫинче ӳссе аталаннӑ унӑн таланчӗ пӗтӗмпех вӗсене хирӗҫ тӑрать.

Халӑхран уйрӑм, хӑйне пысӑка хурса, таҫти пӗлӗтре

вĕçсе çӳрекен, пуш пичке пек шавлă поэзи Ухсайшăн пачах та ют. Унăн поэзийĕнче тăван уй-хирсен, ешĕл вăрмансен, шăнкăр-шăнкăр çăлкуçсен, тăрă кӳлĕсен çепĕçлĕхĕпе илемлĕхĕ, чăваш халăхĕн ĕçченлĕхĕпе типтерлĕхĕ, кирек мĕнле йывăрлăхра та халăхăн сӳнмен ĕмĕчĕ, çутă кунсен шанчăкĕ палăрать, чăваш çĕршывĕпе унăн çыннисен пурнăçĕ курăнать.

Халăх поэчĕ ятне Ухсай пуринчен ытла тивĕçлĕ теме юрать. Нациллĕ хăйеверлĕх, чăвашлăх унăн кашни йĕркинче, кашни сăнарĕнче сисĕнет, тӳрех куçа курăнса каять, унăн кашни сăвви чăваш чĕринче ăшă туйăмсем çуратать, чун-чĕрене тыткăна илет.

Тен, нациллĕ хăйеверлĕх тенине, хăшпĕр çынсем ыйтнă пек, математикăри евĕр тĕрĕс палăртма май та çук пулĕ. Чăн та, унăн уйрăм паллисемпе уйрăмлăхĕсене каласа тухма пулать ĕнтĕ, çапах та ку ăнланăва тĕпĕ-йĕрĕпех тата вĕçне çитиех каласа пама питех те йывăр, ăна туйса илни, чунпа йышăнма пĕлни кирлĕ. Ухсай çырнисенче вара вĕсене, чăвашлăх палăрăмĕсене, кашни утăмрах тупатăн, вăл кирек мĕн çинчен çырсан та, чăваш вулаканĕ çакна чăваш поэчĕ çырнине çавăнтах туять, чунĕпе йышăнать. Наци поэчĕ çырнинче вулакан хăй мĕн калас тенине сăвăç витĕмлĕрех, уçăмлăрах та илемлĕрех каланине курать, пĕтĕм пурнăçпа ĕç çине хăй евĕрлĕрех пăхнине, вĕсене ун евĕрлех хаклanine асăрхать. Вăл хамăр е урăх çĕршыв çинчен çырсан та, наци поэчех пулса юлать, пурне те вăл чи малтан тăван халăх куçĕпе виçсе хаклать.

Ухсай çырнисене вуласан, эпир çапла чăваш поэчĕ çеç калама пултарнине, унăн сăввисене илемлетекен танлаштарусем, метафорăсем, сăмах çаврăнăшĕсем тата поэзие чĕрĕ сăнлăх кĕртекен ытти мелсем пĕтĕмпех чăвашăн пулнине çийĕнчех туйса илетпĕр. Ю. Олеша, Ухсайăн «Ту урлă çул» сăвăлла романĕн вырăсла подстрочникне вуланă хыççăн, пирĕн поэта метафора ăсти тесе каланăччĕ.

Чăн та ĕнтĕ, Ухсайăн чĕлхи çав тери илемлĕ те пуян. Кунта та хăшпĕр тĕслĕхсем илсе кăтартмасăр иртме çук. «Çăкăр — çĕр ачи», «Ĕç — пурнăç ашшĕ», «Çĕр — мул хуçи», «Çăкăр кăвапи тавра çаврăнса çӳрет тĕнче», «Çичĕ пăтлă ыйхă», «Хуйхă—хурт», «Çумăр çурĕ пин упа сурнă евĕр пĕрхĕтсе», «Кураттăм асамат кĕперĕ тăва кӳлсе утланнине» — чăваш вулакан чунне уçса яракан, унăн чĕрине пырса тивекен танлаштарусемпе эпитетсем Ухсай поэзийĕнче тăтăшах та йĕркеренех. Вăл чăннипех асамлă чĕлхе ăсти тесе калас килет, аçальтен мар вăл хăй те çапла çырать:

Ылтăн-кĕмĕл те ахах
Çиçнĕ пекех çиçекен
Çитмĕл çичĕ пин сăмах
Пухрăм халăх хушшинче

Каларăмăр ĕнтĕ, Ухсай произведенийĕсенче нациллĕ хăйевĕрлĕх тени кашни йĕркере, кашни сăнра, кирек мĕнле ӳкерчĕкре те яр-уççăн палăрса тăрать, çак пахалăх унăн сăввисен эрешлĕ тулашĕнче çеç мар курăнать, вĕсен ăшчиккинче выртать, хăйне майлă илемлĕхпе сăнарлăх парса тăрать. Кашни вулакан, чăваш-и вăл е урăх халăх çынни, вĕсене алла тытсанах, çакна чăнчăн халăх поэчĕ çырнă теме пултарать.

Халăх шухăш-кăмăлне лайăх ăнланни, унăн пурнăçне пĕлсе тăни, ку чухнехи чи кирлĕ ыйтусене хускатни Ухсай поэзине чĕрĕ вăй парать, тĕрĕс те типлă сăнарсем тума пулăшать. Поэт тăван халăх умĕнче хăйне яланах парăмра шутлать, халăх юратакан, унăн кăмăлне тивĕçтерекен паха произведенисем çырма тăрăшать. Яланах халăхпа пĕрле, кирек хăçан та халăхшăн — акă мĕнле поэтăн ырă та çутă тĕллевĕ.

Тăван халăха ытларах усă кӳрес ырă ĕмĕт унăн сăввисенче тăтăшах тĕл пулать. Ухсай тăван халăхпа уйрăлми çыхăннă, унăн юрри кунта вăй илсе çӳллĕ

тӳпене ҫӗкленнӗ, ҫаванпа та сăвăҫ хăйне хăват панă, ҫунат парса вӗҫтернӗ ҫӗршыва, халăха нихҫан та манмасть, сăвă-юрринче вӗсене мухтаса ҫаврăм хыҫҫăн ҫаврăм хывать. Мода тени хыҫҫăн кайни, паян пӗр тӗрлӗ, ыран пачах урăхла юрлани ҫук вара Ухсайăн, унăн ҫулӗ яланах пӗрре — халăхпа пӗрле.

Тӳрӗ тытрăм эп хама,
Утрăм халăх ҫулӗпе.

Ҫакăншăн поэт чăннипех те мухтанма пултарать; вăл тăван халăха нумай паха произведенисем пачӗ, чăваш хушшинче Ухсай сăввисене пурте — ватти те, вӗтти те — пӗлеҫҫӗ, пăхмасăр калаҫҫӗ. Поэт ӗҫне халăх йышăннинчен пысăкрах хисеп мӗн пултăр!

Ҫамрăклах вăл пысăк шухăшпа ӗмӗтленсе ҫапла ҫырнăччӗ:

Сăвă-юра́ хирӗнче
Вăрман пулса ӳсӗп эп,—
Вăрманти йăвасенчен
Ҫитмӗл ҫиччӗн ыткăнса
Вӗҫнӗ кăйкăр кайăк пек,
Юррăмсем сӗтел ҫинчен
Ҫӗкленсе, ян янраса
Тăрӗҫ пӗлӗт хушшинче.

Ку сăмахсем пустуй каппайланни, пуш декларации ҫеҫ пулмарӗҫ. Халӗ чăннипех ӗнтӗ Ухсай сăвви-юррисем Чăваш ҫӗршывӗнче ҫеҫ мар, пӗтӗм аслă Совет ҫӗршывӗнче хăватлăн янраҫҫӗ, чăваш халăхӗн мухтавне ҫӳлтен ҫӳле ҫӗклеҫҫӗ.

Унăн тахҫанах хрестоматисене кӗнӗ «Халăхăн ылтăн кӗнекине», «Кӗрхи октависене» тата ытти произведенийӗсене чăвашра кам пӗлмест пулӗ! Октябре, Совет Конституцине мухтаса ҫырнă «Халăхăн ылтăн кӗнекине» ку темăпа халиччен пичетленсе тухнă чи вăйлă произ-

веденисенчен пĕри тесен те йанăш пулмасть. «Кĕрхи октавăсенче» вара рембрандтла вăйлă, куçа илĕртекен картинăсем. Çанталăкăн кашни вăхăчĕн хăйне евĕр илемĕ пур. Ухсайшăн вара кĕр мăнтăрĕ, çĕмелсемпе тулнă уйсем, самăр выльăх-чĕрлĕх, кĕрхи тулăх кĕреке илемлĕрех. Каллех пĕтĕмпех халăхла, чăвашла шухăшсем. Хресчен тырри-пулли ăнтăрччĕ текен шухăшпа çулленех çуракине тухать, çак ĕмĕтпех çу каçать, кĕрхи тулăх уй-хирсене курсан вара савăнмаллипех савăнать. Эпĕ — хресчен ачи, хресченле шухăшлатăп, тет Ухсай.

Кусем вĕсем пĕртте ăнсăртран персе янă сăмахсем мар, вĕсенче тарăн шухăш пытанса ларать, çĕр-аннерен, хамăр ӳссе çитĕнсе çын пулнă çĕршывран нихçан та уйрăлмалла мар, тăван чĕлхерен, халăхран ютшăнни, хăвна хăв лысăка хуни кăкăр ĕмĕртсе ӳстернĕ амăшне ывăлĕ пăрахнипе пĕрех. Тăван çĕр çине çирĕп тымар янă поэзи çеç вăйлă та тулли сĕткенлĕ. Ухсай калашле:

Çынсем юрлаччăр, сырччăр ода
Çеçке çинчен те каç çинчен!
Хаваслă эпĕ — тутлă утă
Çăра ӳссен çарансенче.

Поэта мĕншĕн-ха чечексен сăмсана кăтăклантаракан ырă шăрши мар, вăхăтра çĕртме туса хăварнă, тарăн сухаланă кăпăш тăпра витсе тăракан уй-хир ытларах кăмăла кайнине пĕлес тетĕр пулсан, татах итлĕр:

Хирте çеçке ӳсмен чухне
Хитре хура тăпра хăвачĕ,
Сĕткенлĕ пашкăрса кулачă
Пырса ларать сĕтел çине,
Вара ун тутлă сĕткенне
Мухтатăп эп, тăпра поэчĕ.

Пурнăç тăпраран пуçланать тесе ахаль каламан. Пур ӳсентăран та, чĕрчун та тăпраран апат-çимĕç илсе тăрать. Тепĕр чухне усăсăр çумкурăк хитре чечек кă-

ларать, çимĕçĕ вара çиме юрăхсăр. Поэзире те çавнашкалах. Аякран пăхма илĕртӳллĕ, акăш-макăш кăшкăруллă сăвăсен вăхăчĕ те часах иртет, тулаш тумĕпе кăна мар, чунĕпе илемлĕ, шухăшĕпе пуян поэзи ĕмĕрлĕхе юлать.

Чăн-чăн поэт унашкал ниме тăман хитре теттесемпе аппаланса вăхăта ирттермест, вăл халăхпа пĕрле ĕçлет, кĕрешет, саманан чи çивĕч те кирлĕ ыйтăвĕсене хускатать, вĕсене хăвăртрах татса парас ĕçе хайĕн пĕтĕм пултарулăхне парать. Вăл, Ухсай калан пек, тĕрĕссипех халăх чанĕ, халăх сасси, ун йыхравçи. Вăл кĕрешӳрен, политикăран аякра тăма пултараймасть, хăйĕн наци хупăлчи ăшне те хупăнса лармасть. Пысăк тĕллевпе, халăхпа тата партипе уйрăлми тачă çыхăннă поэзире нацилĕхпе интернацилĕх килĕшӳллĕн пĕрлешсе тăраççĕ, пĕр-пĕрне вăй параççĕ. Çакна Ухсай тĕслĕхĕ те ĕненмелле çирĕплетет. Малтанах каларăмăр, Ухсай пур енчен те чăваш поэчĕ, анчах унăн сăввисене ытти халăхсем те юратса вулаççĕ, лайăх пĕлеççĕ. Интернацилĕх вăл темĕнле абстрактлă япала мар, хăйĕнче вăл нациллĕ культурăсен чи лаха çитĕнĕвĕсене пĕрлештерсе тăрать.

Социализм саманинче çĕнĕрен çуралса вăй илнĕ чăваш çынни те хăйне пĕтĕм совет халăхĕнчен уйăрмасть, хăйне совет обществин тулли правиллă членĕ тесе шутлать, Совет влаçĕ вăхăтĕнче çĕнсе илнĕ аслă çитĕнӳсем уншăн çав тери хаклă, вĕсене вăл пĕтĕм вăйран хӳтĕлеме, вĕçне çитиччен кĕрешме хатĕр. Ухсай хăй те, вăл вăрçă вăхăтĕнче çырнă произведенисенчи геройсем те ирĕклĕхшĕн, Тăван çĕршыв никама пăхăнмаллăхĕпе чысĕшĕн хура эшкерсене хирĕç паттăр çапăçаççĕ, Кĕлпук мучин нумай-нумай мăнукĕсем кăкăр тулли орденсемпе медальсем çакса таврăнаççĕ. Ялта юлнисем, каллех Кĕлпук мучи пек ĕçчен те чăтăмлă çынсем, фронта мĕн кирлине тatти-сыпписĕр леçеççĕ, ирсĕр тăшмана çĕнтерме пулăшаççĕ.

Нумай юнлă çапăçусенче пулать поэт, çĕршер те пиншер çухрăм çарпа пĕрле утать, тăшман тустарса хăварнă хула-ялсем витĕр иртет, ун чĕри тарăхупа, тавăру вучĕпе тулать. Вăл, çав йывăр та хаяр кунсен, паттăрла ĕçсен летописецĕ пек, кăштах каннă самантсенче сăвăсем çырать, хăй курни-тӳсни çинчен, кашни çеккунтра вилĕмпе юнашар çӳрени çинчен, çапах та совет салтакĕ пурпĕрех çĕнтерес шанчăкпа кĕрешни çинчен чĕререн тухакан сăмахсемпе каласа парать.

Тар шăршинче те тĕтĕмре, шавра
Çӳренĕ май эп кĕнеке çыратăп,
Ана хам атă кунчинче усратăп.

«Атă кунчинчи тетрадь» ярăма кĕнĕ сăвăсенче эпир иртнĕ вăрçă кунĕсене куратпăр, тăшман мĕнле тискерленнине кура тарăхатпăр, çĕнтерӳ мĕн тери йывăрпа килнине ăнланатпăр. Çав сăвăсене хумханмасăр никам та вулама пултараймĕ, тен, вăрçăн хаяр кунĕсене тӳссе курнисен куççулĕ те тухĕ, çапах та йывăр çухатусен тӳсме те çук хуйхине çĕнтерсе, вăл мирлĕ кунсем çитнишĕн савăнĕ.

«Хурçă та шăраннă» хаяр вутран чĕрĕ тухнă салтаксем тăван килĕсене таврăнаççĕ, вĕсен мирлĕ ĕçшĕн тунсăхланă аллисем киле çитнĕ-çитменех пуртă-пăчкă ярса тытаççĕ те юхăннă хуçалăха юсама тытăнаççĕ.

. . . . . . . . . . . пăчку
Шыв пек йывăça касса
Иртĕ çамрăк çăртланла,
Сап пуртту та авăтса
Тăрĕ чăн-чăн куккукла.

Хаяр вăрçă хыççăн мирлĕ ĕçе таврăннăран ĕнтĕ поэт сăввисенче чăн-чăн савăнăç, хаваслăх, хăвăртрах пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме тытăнас хастар кăмăл çиççе тăрать.

Пархатарлă та тăрăшуллă ĕç вăл — Ухсай поэзийĕнче хăйне уйрăм та пысăк тема. Поэт хитрелĕхе пĕлĕтре шырамасть, ăна вăл çĕр çинче, ĕçчен çынсем — пĕтĕм пурлăх-ырлăха тăвакан ăстасем хушшинче тупать, унăн пĕтĕм творчествинче ĕçчене пысăк хисепе хурса мухтасси, унăн чун-чĕрине кăтартса парасси пысăк вырăн йышăнать. «Ĕç — пурнăç ашшĕ»,— тет Ухсай, нумай çĕрте вăл «ĕçчен чĕреллĕ паттăр чăваша» мухтать. Ку тĕлĕшпе унăн «Чăваш чунĕ» сăвви уйрăмах кăтартуллă.

— Чăваш чунĕ мĕн тени? —
Тесе эпĕ тĕпчесен,
— Унта чăваш ĕçченни,—
Терĕç мана вагтисем.

Хайĕн ачи-пăчине чăваш мĕн пĕчĕкрен ĕçе юратма хăнăхтарса вĕрентсе ӳстернĕ, пĕчĕк ачасем ашшĕ-амăшĕпе пĕрле вăй çитнĕ таран ĕçе яланах хутшăннă. «Ĕçчен çынна ял савать», тенĕ, çакă вара пĕтĕм халăх педагогикин тĕп никĕсĕнче выртнă. Шкул çулне çитменнисем валли çырнă хăйĕн «Пуканесен бригади» произведенийĕнче Ухсай, тĕпрен илсен, ачана çак енчен кăтартса парать те: вăл лара-тăра пĕлмест, темскер пĕрехмай ăсталать, тăрăшать. Юлашкинчен автор çапла вĕрентсе калать: ку ача лайăх çын пулать, тет.

Ухсай таланчĕ çав тери анлă та нумай енлĕ. Сăвăç ку таранччен çырнисене илсе пăхсан, вăл чăваш литературин нумай жанрĕсенче тарăн йĕр хăварнине курмасăр тăма çук. Вăл лирикăра та, эпикăлла поэзире те, драматургипе публицистикăра та, ача-пăча литературинче, çавăн пекех критикăпа литературоведенире те ăнăçлă ĕçлет, çав жанрсене малалла ярас тĕлĕшпе çĕнĕ çулсем хывать.

Тăван чĕлхене малалла аталантарас ĕçре те Ухсай тӳпи пысăк. Хальхи чăваш чĕлхине Ухсай поэзийĕ çĕнĕ сăнарлăхпа илемлĕх кĕртет, чĕлхе витĕмлĕхне нумай

ӳстерет. Унӑн пултарулӑхӗ, вӑл чӗлхепе пӗлсе усӑ курни, сӑмах пуянлӑхне ӳстерсех пыни, тӗсне ҫухатнӑ сӑмахсене те ҫӗнӗрен чӗртсе ҫиҫтерни хамӑр чӗлхе ҫине шанмасӑртарах пӑхакансене шухӑшлаттарма тивӗҫ. Ан тив, вӗсем Ухсай ҫырнисене вуласа, унӑн сӑмах ҫӳпҫин иксӗлми пуянлӑхне курса, тӑван чӗлхене тӗплӗн шухӑшламасӑр-тумасӑр хурласа тӑкма ан васкаччӑр, ӑна хисеплеме вӗренччӗр. Иван Яковлевич Яковлев хӑй вӑхӑтӗнчех чӑваш чӗлхине хурлама пӑхнӑ, чӑвашсен кӑткӑс туйӑмӗсене палӑртма сӑмахӗсем те ҫук пулӗ тесе калакан чиновнике хирӗҫлесе ҫапла каланӑ: лайӑх та вӑйлӑ туйӑмсем пулсан, халӑх ӑна палӑртма сӑмахсем тупатех, тенӗ.

Яков Ухсай произведенийӗсене вуласан, эпир чи ачаш та кӑткӑс туйӑмсене ҫырса кӑтартма та поэт тӑван чӗлхерех паха сӑмахсем тупнине тӑтӑшах куратпӑр. Пӗр вӑхӑтра наци чӗлхисен пуласлӑхӗ пирки хаҫат-журналсенче хӗрӳ тавлашу пуҫланнӑччӗ, вак нацисен чӗлхисен ӗмӗрӗ нумая пырас ҫук, вӗсем пирӗн ӗмӗртех пӗтсе лармалла текен хӑшпӗр хыпаланчӑксем те тупӑннӑччӗ. Ун чухне нумай халӑхсен наци культурин чи лайӑх представителӗсем ҫак сиенлӗ шухӑша хирӗҫ хӗрӳллӗн тухса каласрӗҫ. Ухсай та чӑтаймарӗ, хӑй мӗн калас тенине сӑвӑра палӑртрӗ:

Каласасса каласӑп эпӗ
Нептун ҫинче те чӑвашла.

Космос ӗмӗрӗнче те наци чӗлхисем пӗтсе лармаҫҫӗха, вӗсем малалла аталанаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах вырӑс чӗлхи те нумай ҫынсемшӗн иккӗмӗш тӑван чӗлхе пулса пырать. Ҫак икӗ юхӑм пӗр-пӗрне пачах та хирӗҫлемеҫҫӗ, юнашар пыраҫҫӗ.

Ҫапла ӗнтӗ, ку чухнехи чӑваш культурин пур ыйтӑвӗсене илсе пӑхсан та, вӗсенче Ухсайӑн, унӑн тӗлӗнмелле поэзийӗн, унӑн ҫулӑмлӑ публицистикин витӗмлӗхне

куратӑн, мӗншӗн тесен чӑваш характерӗнче Ухсай вӑл— ҫав тери анлӑ та хӑватлӑ пулӑм, хӑйне евӗр тӗнче.

Юлашки вӑхӑтра хӑшӗсем Ухсай таланчӗ шӗвелсе пырать теме те пӑхрӗҫ. Пачах та ҫук, унӑн пултарулӑхӗ юлашки ҫулсенче тата ҫӳллӗрех пусӑма ҫӗкленчӗ, ҫӗнӗ те ырӑ пахалӑхсемпе пуянланчӗ. Нумай пулмасть Ухсайӑн Мускаври издательствӑсемпе журналсенче тухнӑ произведенийӗсем те ҫакна лайӑх ҫирӗплетсе параҫҫӗ.

Эпир, чӑваш вулаканӗсем, пысӑк талантлӑ Ухсай Яккӑвӗпе пӗр вӑхӑтра пурӑннипе, унӑн ытарайми сӑвви-поэмисем ӗҫчен чӑваш ятне ҫӳле ҫӗкленипе телейлӗ. Ҫак кӗнекене вулакан, поэзин асамлӑ тӗнчине кӗрсе кайса, пӗр тытнӑскер ӑна аларан ямӗ, чӗререн хумханса унпа паллашӗ, юлашкинчен поэтӑмӑра чунтан тав тӑвӗ.

Ип. ИВАНОВ.